Ял хуçалăх ыйтăвĕсемпе

# Патшалăх пулăшăвĕпе усă курмалла

***Çитес 2009 çул пирĕн республикăра Ял хуçалăх çулталăкĕ пулни çинчен Чăваш Республикин Президенчĕ нумаях пулмасть Шупашкарта паллă тунă ял хуçалăх ĕçченĕсемпе апат-çимĕç тирпейлекенсен уявĕнче пĕлтерчĕ ĕнтĕ. Çакă ял хуçалăхне паракан пулăшу татах та ӳсесси пирки шанăç çуратать. Патшалăх паян та ял хуçалăх предприятийĕсене тĕрлĕрен пулăшу парать. Мĕнлерех усă кураççĕ паян районта унпа? Çакăн çинчен каласа пама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕнчен, ял хуçалăх пайĕн ертӳçинчен В.К. АНАНЬЕВРАН.***

– Патшалăх чăннипех те çулсеренех ял хуçалăх предприятийĕсемпе фермерсене тĕрлĕ енлĕ пулăшу парать. Ӳсен-тăран производствине илес пулсан акă элитăллă вăрлăх туянма кăна кăçал пирĕн района 1 млн. та 416 пин тенкĕ укçа килнĕ. Вĕсенчен 983 пин тенкипе усă курнă. Пурĕ 14 хуçалăх туянчĕ элитăллă вăрлăха.

Е тата ял хуçалăх культурисене çум курăкран, тĕрлĕ чиртен сыхламалли препаратсем илме укçа уйăрнине илер. Малтан килнĕ 1 млн. та 098 пин тенкĕпе те, каярахпа уйăрнă 23 пин тенкĕпе те йăлтах усă курнă. Пурĕ 26 ял хуçалăх предприятийĕпе хресчен (фермер) хуçалăхĕ усă курчĕ ку çăмăллăхпа.

**– Минераллă удобрени илме паракан пулăшун калăпăшĕ мĕнле пулчĕ кăçал?**

– Асăннă пулăшăва минераллă удобрени илнисене пурне те параççĕ. 16 хресчен (фермер) хуçалăхĕ тата 12 ял хуçалăх предприятийĕ минераллă удобрени туянчĕ кăçал. Пурĕ РФ тата республика бюджетĕнчен 9 млн. та 014 пин тенкĕ килмелле пулсан ку тĕллевпе, 2 млн. та 088 пин тенки килнĕ района. Ытти сумми те килсе çитмелле.

**– Выльăх-чĕрлĕх отрасльне аталантаракансене мĕнлерех пулăшу параççĕ тата?**

– Чи малтанах пысăк продуктивлă ĕнесене тытма паракан пулăшу çинче чарăнар. Ăна иртнĕ çул кашни ĕнерен вăтамран 3,5 пин килограмран кая мар сĕт сунă хуçалăхсем тивĕçеççĕ. Пирĕн районпа вĕсем 9 хуçалăх пулчĕ. Çак тĕллевпе пирĕн района кăçал 4 млн. та 918 пин тенкĕ укçа килчĕ. 612 пин тенкине каялла памалла пулчĕ. «Свобода» хуçалăх сĕт чакнипе кăçал илеймерĕ ку çăмăллăха. «Оринино» тата «Восток» хуçалăхсем те çак сăлтавпах списокран тухса ӳкрĕç, «Лидер» – ĕнесене сутса янипе. Паянхи куна патшалăх паракан çак пулăшупа 5 хуçалăх усă курать: «Ударник», «Герой», Ильич яч. хис., Суворов яч. хис., Чкалов яч. хис. хуçалăхсем.

Ăратлă выльăхсем туянма уйăрнă лимит кăçал 549 пин тенкĕпе танлашрĕ пулсан, 338 пин тенкипе усă куртăмăр. Ăратлă выльăхсене 4 хуçалăх туянчĕ. «Орининопа» «Восток» ăратлă сысна ăçисене, «Афанасьев» Х(Ф)Х 63 пуç ăратлă сысна, В.П. Павлов уйрăм предпринимательăратлă лашапа 3 така туянчĕç.

Çавăн пекех кăçал пĕтĕлентерекен вăкăрсен вăрлăхне 10 хуçалăх туянчĕ. пурĕ 206 пин тенкĕпе (лимит – 380 пин тенкĕ) усă куртăмăр.

Патшалăх ăратлă сысна амисене тытса тăма та укça парса пулăшать. Кăçал ку тĕллевпе РФ бюджетĕнчен 2 млн. та 124 пин тенкĕ килчĕ, республика бюджетĕнчен – 637 пин тенкĕ. «Свобода» хуçалăх ку пулăшупа 2 млн. та 137 пин тенкĕлĕх усă курчĕ, Е. Андреев яч. хис. хуçалăх – 624 пин тенкĕлĕх.

Ытти çăмăллăхсене илес пулсан, çакна палăртмалла: ăратлă çăмартасем туянма лимит 395 пин тенкĕпе танлашрĕ, 285 пин тенкипе усă курнă.

Çавăн пекех патшалăх комбикорм туянма та пĕр хутчен субсиди парса пулăшать. Унсăр пуçне сысна тата чăх ашне çитĕнтерсе сутнăшăн та патшалăх пулăшу парать. Сыснан 1кг чĕрĕ виçишĕн 10 тенкĕ, чăхăн 1 кг чĕрĕ виçишĕн 5 тенкĕ парса пулăшать. Пĕрремĕш çур çул пĕтĕмлетĕвĕсемпе çакна валли района РФ тата республика бюджетĕнчен пĕрле 6 млн. та 550 пин тенкĕ килмелле. Пĕтĕмпе 25 хуçалăх тивĕçет ку çăмăллăха, çав шутран 7-шĕ – Х(Ф)Х.

**– Владислав Кириллович, патшалăх хуçалăхсене нумай вăхăтлăх кредит парса та пулăшать. Йышлăн пулчĕç-и кăçал ку пулăшупа усă куракансем?**

– Пĕтĕмпе 3 хуçалăх илчĕ нумай вăхăтлăх паракан кредита. «Ударник» хуçалăх 25 млн. тенкĕ илсе, 27 единица çĕнĕ техника туянчĕ. Çав шутран тыр-пул пухса кĕртмелли икĕ «Полесье» комбайн, çĕр улми пухса кĕртмелли икĕ «Полесье ПКК-2» комбайн, 3 трактор тата плугсем, косилкăсем, сӳре тата ытти те. Чкалов яч. хис. хуçалăх 3 млн. та 510 тенкĕлĕх илчĕ кредита: «Вектор» комбайн туянчĕ унпа. Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăх вара патшалăх паракан çак çăмăллăхпа 1 млн. та 251 пин тенкĕлĕх усă курчĕ: 2 автомашина туянчĕ.

**– Патшалăх килти хушма хуçалăх тытакансене те пулăшать. Ку тĕллевпе кредит илекенсем кăçал мĕн чухлĕн пулчĕç?**

– Пурĕ кăçал килти хушма хуçалăха аталантарма 434 çын кредит илчĕ. Пурĕ 71375 пин тенкĕлĕх.

**– Владислав Кириллович, сăмаха вĕçленĕ май мĕн хушса каланă пулăттăр?**

– Чи малтанах халĕ кредит илнĕ хуçалăхсен ăна вăхăтра татассишĕн тăрăшмалла. Çавăн пекех паян хуçалăхсем умĕнче тăракан тепĕр задача вăл – туса илнĕ ял хуçалăх продукцине хаклăрах хакпа вырнаçтарасси.

Тата çакна каласа хăварасшăн, патшалăх паракан пулăшупа усă курмалла. Вăл пире çĕнĕ техникăпа, çĕнетнĕ вăрлăхпа усă курса, çĕнĕ технологие пурнăçа кĕртсе производствăна малалла аталантарма пулăшать. Çаксене пурнăçа кĕртсен тата вырăнсенче вĕсемпе тĕрĕс усă курса пĕтĕм ĕçе тĕрĕс йĕркелесен, лару-тăру ял хуçалăхĕнче палăрмаллах лайăхланĕ. Çитес çул вара паян мĕн тунипе çырлахас марччĕ, кăçалхинчен темиçе хут тăрăшарах ĕçлесчĕ пур енĕпе те.

**– Тавах, Владислав Кириллович, калаçушăн.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

Конкурс çĕнтерӳçисем çинчен

# «Хĕвел çаврăнăш» хӳттинче çитĕннисене çитеймерĕç

Районта кам 50 тĕрлĕ ытла гладиолус, 40 тĕрлĕ ытла тюльпан çитĕнтерет? Чăршă ялĕнче пур ун пек чечек ăсти, тейĕ вулакан. Вăлах Нискасси шкулĕнчи çемçе теттесен фабрикин ертӳçи пулса тăрать тесен вара пирĕнтен кашниех пĕр иккĕленмесĕрех çапла хуравлĕ:

– Ку вăл М.Н. Пушкарева.

Маргарита Николаевна ертсе пыракан «Хĕвел çаврăнăш» айĕнче çитĕннĕ çемçе упасемпе тилĕсем, мулкачсемпе йытăсем районти кирек мĕнле мероприятие те илем кӳреççĕ. Кирек епле конкурсра та парнеллĕ вырăнсене çĕнсе илеççĕ.

Çак кунсенче Маргарита Николаевнан «Хĕвел çаврăнăш» студийĕнче ăсталанă чĕр чунсем алăпа çĕленĕ теттесен регионсен хушшинчи 3-мĕш курав-конкурсĕнче хăйсен илемĕпе тĕлĕнтерчĕç. Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕпе суту-илӳ министерстви «TV-Транс» чикĕллĕ яваплăхлă обществăпа пĕрле регионсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетес тĕллевпе йĕркелерĕ ăна. Хамăр республикăри районсемпе пĕрле Саратов, Чĕмпĕр, Хусан тата Чăнлă хулисенчен хутшăнчĕç унта. Конкурса хутшăнакансем 250-ăн пулчĕç, 600 ĕç тăратрĕç вĕсем унта. Нискасси шкулĕнче вĕренекен «Хĕвел çаврăнăш» студине çӳрекен М. Григорьеван (10 кл.) «Патша хĕрĕ-акăшĕ, «Ланка-упăти», Е. Антонован (8 кл.) «Тимĕр шапи», «Тилли», 6 класра вĕренекенсем ăсталанă «Фермер хуçалăхĕ» курава килнисене тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕç. Çемçе теттесем куравран çĕнтерӳçĕ дипломĕпе тата 4 пин тенкĕ укçан парнене тивĕçни çинчен калакан сертификатпа таврăнчĕç.



Палăртса хăвармалла, ку конкурса М.Н. Пушкарева ертсе пыракан «Хĕвел çаврăнăш» ачисем пĕрремĕш хут хутшăнмаççĕ. Алăпа тунă теттесен регионсем хушшинчи 1-мĕш конкурсĕнчен 2 вырăнпа таврăннăччĕ, иртнĕ çул вара 2-мĕш конкурсран – 1 вырăнпа тата 1 пин тенкĕ укçан-парнепе. Çĕнсе илнĕ чикĕрен чакмаççĕ çав Нискассисем.

Ăçта кăна пулмарĕç пулĕ Нискасси шкулĕнче Маргарита Николаевна юратăвĕпе çуралнă çемçе теттесем – Мускаврa, Килгинино, Козьмодемьянск, Шупашкарпа Çĕн Шупашкар, Етĕрне хулисенче, Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи, хамăр районти шкулсенче. Заказсем те йышăнаççĕ хĕвелçаврăнăшçăсем. Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерстви ыйтнипе Улатăр районĕнчи ача-пăча санаторийĕ валли мĕн чухлĕ илемлĕ чĕр чунсем çĕлемерĕç пулĕ.

Студире çемçе теттесем çĕленипе пĕрлех искусствăн ытти тĕсĕсене те алла илеççĕ ачасем. Тăварлă чустаран та ăсталаççĕ чĕр чунсене, хутпа картонран та тăваççĕ вĕсене.

Куравран вара Маргарита Николаевна хăй те çунатлансах таврăнчĕ.

– Нумай çĕнĕ технологи çинчен пĕлтĕм эпĕ унта. Ăшăнсан пукланакан ятарлă сăрăсем, тĕрлемелли ятарлă сăрăсем пур иккен. Пусмана çунтарса тĕрлĕ кĕлеткесем касса кăларма пуçларăмăр. Халĕ ку меслете тата та лайăхрах ăнланса килтĕм, çĕнĕ шухăшсем çуралчĕç курав-ра. Пурнăçа кĕртмелли çеç юлать вĕсене, – тет хăпартланса ачасемпе çемçе теттесен юратнă аслă тусĕ.

– Укçан парнепе мĕн тума шутлатăр? – ыйтатăп унран.

– Çемçе теттесем çĕлеме материалсем туянăпăр. Ĕмĕтсем пысăк: тăварлă чустапа ĕçлеме тата хутран аппликации тума вĕрентекен кĕнекесем туянтăм, – хавассах пĕлтерет Маргарита Николаевна.

РФ пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан хисеплĕ ĕçченĕ, «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» паллăна тивĕçнĕ М.Н. Пушкарева ертсе пыракан «Хĕвел çаврăнăш» çемйи апла пулсан кĕçех çĕнĕ çемçе пакшасемпе, чустаран ăсталанă кушаксемпе, хутран тунă акăшкăвакарчăнсемпе пуянланĕ.

**Л. ПЕТРОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: регионсем хушшинчи конкурса тăратнă ĕçсем.**

Прокуратура материалĕсем тăрăх

# Харкашу пысăк инкекпе вĕçленнĕ

Эрех çыннăн организмне сиен кӳнипе пĕрлех тĕрлĕ харкашусен, инкексен, преступленисен сăлтавĕ те пулса тăни вăрттăнлăх мар ĕнтĕ. Пурте пĕлетпĕр ăна. Апла пулин те ун енне туртăнакансем сахалланмаççĕ-ха. Унпа çыхăннă преступленисен шучĕ те пĕчĕк мар.

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче Муркаш районĕн сучĕ Кашмашра пурăнакан Виталий Алексеевич Егоров тĕлĕшпе çыхăннă ĕçе пăхса тухрĕ, ăна 8 çуллăха ирĕкрен хăтарма, çирĕп режимлă колонире тытса усрама йышăнчĕ.

Мĕн пирки сăмах пырать-ха кунта? Виталий Алексеевич Кашмашра Советская урамри 58-мĕш çуртра хăйĕн çемйипе тата Владислав шăллĕпе пĕрле пурăннă. Пиччĕшпе шăллĕ килĕштерсех кайман. Харкашусем вĕçĕмех пулнă, уйрăмах эрех ĕçсен. Владислав эрех сыпса таврăнсан килтен тухса кайма хăвалани, кил-çурта вут тивертессипе хăратни те пулнă.

Вĕренĕн вара, мĕн чухлĕ сӳтĕлсен те, вĕçĕ пулатех теççĕ. Ку хутĕнче те çапла пулса тухрĕ. 2008 çулхи июлĕн 11-мĕшĕнче шăллĕпе пиччĕшĕ хушшинче харкашу сиксе тухать. Çитменнине иккĕшĕ те эрех сыпнăскерсем пулнă. Никăшĕ те парăнасшăн мар. Çапла вара Виталий Владислав шăллĕне çывăхра выртакан вутă çурмалли пуртăпа пуçĕнчен 4 хутран кая мар çапать. Владислав Егоров çавăнтах вилсе каять.

Айăпланакан В.А. Егоров судра хăйне РФ Уголовнăй Кодексĕн 105-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе пăхнă преступление тунăшăн айăпланипе пĕтĕмпех килĕшрĕ.

Апла пулин те шухăшласа пăхмалли çук мар. Эрех сыпман пулсан асăннă преступлени пулĕччĕ-ши? Шухăшламалăх вара вăхăчĕ çителĕклипех.

**С. КОШКИН,**
**РФ прокуратури çумĕнчи Чăваш Республики тăрăх Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн аслă следователĕ.**

2008 çул – Ырă ĕçсен çулталăкĕ

# Чи пĕрремĕш парне – Перекет банкĕнчен

«Эс çуралнă кун, çуралнă кун», – çакăн пек пуçланать пĕр чăвашла юрă. Тин çеç алла хăйсен пепкине илнисем ăна малалла çакăн пек тăснă пулĕччĕç: «Пирĕн çемьери телейлĕ кун». Перекет банкĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн ĕçченĕсем вара ноябрĕн 12-мĕшĕнче çемьене «вĕçсе килнĕ» «çĕн кайăксемпе» вĕсен ашшĕ-амăшĕсене саламлама шутларĕç. Савăнăçа пĕрле пайланине мĕн çиттĕр? Перекет банкĕ те çак кунта йĕркеленнĕ-çке. Кăçал вăл 167 çул тултарчĕ. Çавна май кăçалхипе пĕрремĕш хут ирттерчĕç вĕсем «Пирĕн çуралнă кун» ятпа йĕркеленĕ акцие.

Пирĕн районта çак кун миçе ача хăй çут тĕнчене килни çинчен пĕлтерсе сас пачĕ тетĕр-и? Иккĕн. Хорнуйĕнче пурăнакан Н.С. Щукина çак кун хăйĕн пĕчĕк ывăлне Сашăна пурнăç парнелерĕ. Очăкассинчи А.С. Данилован арçын ачи те шăп çак кун çуралчĕ. Павел ят пачĕç ăна. Перекет банкĕн Муркашри уйрăмĕн ĕçченĕсем çак кунсенче вĕсем патне çитсе çак паллă кун ячĕпе саламларĕç.

Перекет банкĕн Муркашри уйрăмĕн управляющийĕ Г.В. Никитин ача амăшĕсене чĕрĕ чечексен çыххине парнелерĕ. Пĕчĕк шăпăрлансене валли илемлĕ курупкана вырнаçтарнă Австралири кĕмĕл укçана пачĕ. Çав пĕр долларлă укçа çинче Хĕвелтухăç календарĕпе пăхса хăварнă 2008 çулăн палли: шăши. Шăши çулĕнче çуралнă ачасене телей сунни ĕнтĕ ку. Телей ыйтать мар-и вара кашни амăшĕ Турăран ачине валли?

– Çирĕп сывлăхлă та телейлĕ пулччăр ывăлусем. Перекет банкĕ пекех вăрăм кун-çуллă пулччăр, – терĕ Герман Владимирович ача амăшĕсене саламланă май.

Ача амăшĕсемшĕн Перекет банкĕн ĕçченĕсем хатĕрленĕ парне кĕтмен телейлĕ самант вырăннех пулчĕ.

– Чăннипех те питĕ кăмăллă пулчĕ пире çак парнене йышăнма. Çак кĕмĕл укçапа ăна çирĕплетекен сертификат пире ĕмĕрĕпех пирĕн пурнăçри çак телейлĕ куна аса илтерсе тăрĕç. Ывăлăмшăн



вара вăл телей уççи, унăн пурнăç çулне уçса пыракан паллă вырăнне пултăр, – тет Перекет банкĕн ĕçченĕсене тав туса Надежда Сергеевна.

Перекет банкĕн çуралнă кунĕнче панă пĕрремĕш парнесем пулмарĕç çаксем. Çак кун Ермак ялĕнче пурăнакан Т.И. Долговашăн та ĕмĕрлĕхех асра юлĕ. Таисия Ивановна нумай çул хушши ĕнтĕ Перекет банкĕн пысăк стажлă укçа хураканĕ. 68 çулхи Таисия Ивановнана Перекет банкĕн çуралнă кунне паллă тунă чух унăн Муркашри уйрăмĕн управляющийĕ банка шаннăшăн хаклă парне пачĕ.

Перекет банкĕ парнесем парать, халăхра вара паянхи тĕнчери кризис вăхăтĕнче кредит пама пăрахнă, текен сас-хура та тухрĕ. Апла мар. Халиччен мĕн тĕрлĕ кредит панă, халĕ те парать вĕсене Перекет банкĕн Муркашри уйрăмĕ. Апла пулсан пĕр иккĕленсе тăмасăрах килме пултаратăр кунта. Сире хапăл тусах кĕтеççĕ.

**Л. ТУКТИНА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Перекет банкĕ парнисене тивĕçнĕ ача амăшĕ Н.С. Щукина.**